# МАН ШУР ТУТĂР ПĚРРЕ ÇЕÇ




Ман шур тутăр пěрре çеç, пěрре çеç,
ман шур тутăр пěрре çеç,
çавăнпа çыхах тăра[тă]п эп, тăра[тă]п эп;

ман тăвансем эсир çеç, эсир çеç,
ман тăвансем эсир çеç, эсир çеç,
çавăнпа килех тăра[тă]п эп, тăра[тă]п эп.

Юратнă шур тутрийě, тутрийě,
юратнă шур тутрийě, тутрийě
нихçан та пуçран каяс çук, каяс çук;

юратакан тăвансем, тăвансем,
юратакан тăвансем, тăвансем,
нихçан та асран каяс çук, каяс çук.